ВĂЙРА ТĂРАКАН КОНСТИТУЦИ— ХĂВАТЛĂ ХĔÇ-ПĂШАЛ,

çапла шутлать Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕн Председателĕн заместителĕ Валентин Агафонов

В. Агафонов нумай пулмасть Пăрачкав, Улатăр, Йĕпреç районĕсенче пулчĕ, промышленноçпа ял хуçалăх предприятийĕсенче, учрежденисемпе организацисенче хăйĕн суйлавçисемпе тĕлпулусем ирттерчĕ,

— «Хыпар» хаçат вулакансене хураврлама яланах хатĕр, — терĕ вăл, — анчах манăн çакăн пек сĕнӳ пур. «Хыпар» — халăх хаçачĕ. Апла-тăк халăхăн Аслă Советпа халăх депутачĕсен ĕçне-хĕлне пĕлмеллех. Паян Йĕпреçре эпĕ суйлавçăсен пысăк йышĕпе тĕл пулатăп. Пырса итлесе пăхăр. Унти хуравсем тивĕçтермесен куçа-куçăн калаçăпăр.

Депутат сĕнĕвĕпе килĕшрĕм. Район администрацийĕн çурчĕн ларусен залĕнче халăх лăк тулли. Ытларахăшĕ — вырăнти Советсен депутачĕсем. Калаçу мĕнле пычĕ çавăн пек çырса илтĕм.

— Президент çурла уйăхĕ—артхатĕрленӳ вăхăчĕ, авăн уйăхĕ чăн-чăн атака тапхăрĕ пулать терĕ. Мĕне пĕлтерет ку, Валентин Алексеевич!

— Ку ыйтăва мана мар, Президента памалла.

— Çапах та...

— Аслă Советпа, Халăх депутачĕсен съезчĕпе çапăçăва вăйлатма шухăш тытнă пулинех. Халăх депутачĕсене халăх суйланă. Президент вара хăйĕн халăхне хирĕç каять-и? Ку Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшсе тăмасть.

Астăватăр ĕнтĕ, кĕçалхи пуш уйăхĕнче Президент Раççей гражданĕсене чĕнсе каланинче çĕршыва тытса пымалли уйрăм йĕрке туса хурасси çинчен пĕлтерчĕ. Аслă Совет, каярахпа Халăх депутачĕсен черетсĕр IX съезчĕ Чĕнсе каланине авторитарлă диктатура туса хума хăтланни, законлă йĕркепе суйланă власть органĕсене тапăнни пулать тесе йышăнчĕç. Конституциллĕ хирĕçлев ун чухне ăнмарĕ. Анчах та Президент, уйрăмах унпа пĕрле ĕçлекенсем, çĕршывăн Тĕп Законне пăхăнманни ырри патне çитерменнине шута илесшĕн мар.

—Тен, Ельцинпа унăн командин çĕнĕ Конституци йышăнасса кĕтсе илме чăтăм çитмест!

— Ку ыйтăва та Президентăн хуравламалла. Чăтăмлăх çукки паллă ĕнтĕ. Аса илтеретĕп. Халăх депутачĕсен съезчĕ Борис Николаевич Ельцин ертсе пыракан Конституци комиссийĕн проектне пĕрремĕш вулавра пăхса тухнă. 1993 çулхи чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕнче уçăлакан съездра ун патне таврăнма йышăннă. Пирĕн çĕршыва нумай-нумай çул ĕçлекен Тĕп Закон кирлĕ. Çавăнпа та Конституцие йышăнма васкани вырăнлă мар.

Аслă Совет атакăран хăрамасть. Пирĕн алăра чи вăйлă хĕç-пăшал: Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ тата унпа килĕшсе тăракан законсем.

— Калмăк Президенчĕ республикăри Советсене салатса ячĕ. Раççейре те çавăн пекех пулса тухмĕ-и!

— Раççей калмăксен çул-йĕрĕпе каяс çук. Анчах шухăшлаттаракан, шута илмелли самантсем пур. Пĕрремĕшĕ. Парламентпа Президент суйлавĕ синчен калакан законсене пĕнетмелле, Раççейĕн хальхи Конституцине улшăнусем кĕртмелле. Иккĕмĕшĕ. Ака уйăхĕнчи референдум массăллă информаци хатĕрĕсем халăх кăмăл-туйăмне ултавлă майпа çавăрса илме пултарнине кăтартса пачĕ.

Тавлашу суйлав таврра пырать. Референдума хутшăннă халăх Президента та, Аслă Совета та малалла ĕçлеме шанчĕ. Çав вăхăтрах эпир те суйлава срокчен ирттерессишĕн тăратпăр. Анчах парламента та, Президента та пĕр вăхăтра суйламалла.

Тавлашу реформа таврра пырать. Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕ нихăçан та экономика реформисене хирĕç тăман. Анчах ăна мĕнле пурнăçласси çине влаçăн икĕ турачĕ тĕрлĕрен пăхни яр-уççăн курăнать.

— Хăçанччен тăсăлĕ паянхи пек лару-тăру!

— Малтан çакна йышăнас пулать. Паянхи йывăрлăхсенче Аслă Советăн айăпĕ те пур. Президента, правительствăна ытлашши шантăмăр. Вĕсем çĕршывăн экономикăпа социаллă пурнăçĕнче ырă улшăнусем тăвас пирки каланă сăмахĕсене ĕнентĕмĕр. Вĕсен ку тĕлĕшпе конкретлă программа çуккине асăрхамарăмăр. Тарăн вар урлă сиксе каçасса шантăмăр, халĕ тĕпнелле вĕçетпĕр. Аслă Совет хăйĕн йăнăшĕсене ăнланать. Вĕсене тӳрлетме тăрăшать. Ака уйăхĕнчи референдумра халăх Президентпа правительствăн социаллă пурнăçпа экономика политикине ырларĕ пулсан, вĕсен ĕç тăвакан органсен, ăна çине тăрса пурнăçламалла. Паллах, меслечĕсемпе майĕсене улăштарса. Реформа çыншăн пултăр.

— Спекулянтсене кирлĕ реформăна аталантармалла-и!

— Ун пекех шутлама кирлĕ мар. Рынок экономики предпринимательствăсăр пулмасть. Тивĕçлĕ законсен никĕсĕ çинче рынока таварсемпе туллин тивĕçтермелле. Паха тавар мĕн чухлĕ нумайрах, вăл çавăн чухлĕ йӳнĕрех.

Тĕрĕсех, халлĕхе пирĕн çĕршывра туянса-сутас текенсем йышлă. Вĕсем патшалăх предприятийĕсенче кăларнă е ют çĕршывсенчен илсе килнĕ таварпа суту-илӳ тăваççĕ. Налук тӳлессинчен пăрăнаççĕ, бюджета миллиардшар тенкĕ лекмест. Çак пулăмсемпе Аслă Совет кĕрешет, çавăнпа та ăна спекуляци çулĕпе пыракан бизнесменсем килĕштермеççĕ.

Агропром комплексĕн вара рынокра ĕçлеме условисем пачах çук. Колхозсенчен, ытти хуçалăхсенчен сутăн илекен продукци хакне çав-çавах патшалăх çирĕплетет. Хушса тӳлесси (дотаци) пирки усăмлăх çук. Кама пулăшмалла: тавар тăвакана, ăна сутакана е туянакана? Текех Америка уçасшăн тапаланатпăр. Ăна уçма кирлĕ мар. Пĕрлешӳллĕ Штатсем тавар тăвакана дотаци параççĕ.

Тепĕр тĕслĕх. Ял хуçалăх продукчĕсене тирпейлекен предприятисене приватизациленĕ чухне конкретлă акцисен пакечĕн пысăк пайĕ тавар туса илекенре пулмалла. Патшалăх пурлăх комитечĕсем вара хăйсен законĕсемпе хресчене айккинелле тĕртсе яраççĕ.

— Валентин Алексеевич, ял хуçалăхĕ çинчен сăмах тапратрăмăр пулсан, ял шăпи пирки мĕн шухăшлатăр! Эпир халăх депутачĕсен II съезчĕ йышăннă закона лайăх астăватпăр. Ăна хатĕрлеме Эсир те хастар хутшăнниă.

— Раççей Федерацийĕн Халăх депутачĕсен II съезчĕ яла аталантарма пысăк пĕлтерĕшлĕ закон йышăнчĕ. Чи малтанах ял хуçалăх производствинче хăрпăрлăхăн нумай енлĕ формисене конституци йĕркипе çирĕплетсе хăвармаллине палăртмалла. Çĕр те уйрăм çын харпăрлăхĕ пулма пултарать. Иккĕмĕшĕнчен, ял хуçалăхĕнче тавар тăвакана патшалăх енчен пулăшу памалла. Ку тĕлĕшпе Аслă Совет япăх мар законсем йышăннă. Сăмахран, çĕр реформи çинчен, тĕш тырă çинчен. Виççĕмĕшĕнчен, ялти социаллă сферăна патшалăх пулăшăвĕсĕр аталантараймăн. Шкул е больница çуртне кам вăйĕпе туса лартăн? Паллах, патшалăхăннипе. Шел, законсем те, программăсем те пурнăçланса пымаççĕ. Чарса тăраканĕ — ĕç тăвакан органсем. Ку е вăл закона ĕçе кĕртме укçа-тенкĕ кирлĕ, анчах пирĕн халĕ те çирĕплетнĕ бюджет çук.

— Сăмах май, Валентин Алексеевич, 1993 çулăн çакăр уйăхĕ иртрĕ, çĕршыв бюджетне халĕ те çирĕплетмен. Мĕншĕн!

— Президент тăкаксем тупăшсенчен питĕ пысăк (21,6 триллион тенкĕ) тесе шутлать. Бюджет проектне РФ Аслă Советĕнче пĕрремĕш хут пуш уйăхĕнче пăхса тухнă. Унтанпа инфляци чылай ӳссе кайрĕ. Президент хăй те референдум умĕн 8 триллион тенкĕлĕх пулăшу памалли указсем йышăнчĕ. Тупăш ăçтан илмеллине никам та кăтартса памасть. Дефицита пĕчĕклетме вара социаллă сферăна каякан укçа-тенкĕрен чакарма сĕнеççĕ. Культура, çут ĕç, сывлăха сыхлас ĕç ахаль те наци тупăшĕн чи пĕчĕк пайне илсе тăраççĕ, унта вăй хуракансен ĕç укçи те чи пĕчĕкки. Паллах, Аслă Совет ку сĕнĕве йышăнмасть, Бюджет çинчен калакан закон ку уйăхра вăя кĕретех.

— Патшалăхăн бюджетра укçа çук, халăхăн вара перекет банкне (патшалăхăн банкне) хывнă укçи-тенки сасартăк пĕтсе ларчĕ. Таварса пама шутлаççĕ-и ăна!

— Эсир миллионшар çынна çав тери хумхантаракан ыйтăва çĕклетĕр. Перекет банкне хывнă укçана индексацилесси пирки калаçу нумайранпа пырать, анчах тĕрĕслĕх патне çитейместпĕр. Аса илтеретĕп. Кун пирки 1991 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче РСФСР законне тата Аслă Совет постановленине йышăннă. Раççей Федерацийĕн Халăх депутачĕсен съезчĕн кăçалхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ, Раççей Президенчĕ тепĕр кунне кăларнă Указ, Раççей Федерацийĕн Конституци сучĕ çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче йышăннă постановлени çав закона пурнăçламалли çинчен çирĕплетеççĕ, анчах ĕç тăвакан органсем ăна ĕçе кĕртмеççĕ. Шантарсах калатăп, Аслă Совет ку ыйтăва куçран вĕçертмĕ.

СЕХЕТ çурă пынă калаçăва хаçат страницисенче пĕтĕмпех çырса кăтартаймăн. Сăмах фермерсем, приватизаци чекĕсем, хаксем çинчен те пычĕ. Юлашкинчен В. Агафонов çапла каларĕ:

— Раççей Федерацийĕн Аслă Совечĕ — реформăшăн, приватизацишĕн, чăн-чăн демократишĕн, право патшалăхĕшĕн. Чăваш Республикинчи тĕлпулусем халăх çак çул-йĕре ырланине ĕнентерчĕç. Çавăнпа та пире кашни гражданинăн политикăри тата социаллă пурнăçри прависене хӳтĕлекен, чăннипех вăйлă та хăватлă Раççей патшалăхĕ йĕркелекен Конституци кирлĕ.

В. ВАСИЛЬЕВ
çырса илнĕ.